## ТĂВАН ПОЭТĂМĂР

Ухсай! Пиччемĕр! Йышăнсам
Ут туртайми хĕрӳ салам!
Пур сан яту халăхăмра,
Пур сан яту Çĕршывăмра.
Эс Пушкăртран, Урал енчен,
Слакпуç чăвашĕ, Силпирен,
Хастар хресчен килйышĕнчен,
Кĕçтенттинсен тĕп йăхĕнчен.
Санта Кĕлпук хăвачĕ пур,—
Эс ачаран ĕçчен, маттур...
Пĕлетпĕр — йывăр çырасси,
Асамлă шухăш каласси.
Халь çӳпçӳнте тупра мĕн чул!
Пур «Акăшкӳл», «Ту урлă çул»,
Кунтах «Тутимĕр», сăвăсем,
Илемлĕ çепĕç юрăсем...
Ивановпа эс, Çеçпĕлпе,
Мĕнпур çыру ăстисемпе
Ĕçлен тăван поэзире,—
Пурне те уншăн тав сире!
Совет поэчĕ эс, Ухсай,
Мĕн ыррине пĕрле пухса
Савса пиллетĕн халăха,—
Пире çав хаклă, çав паха.
Тытсан Ухсай кĕнекине —
Туян чĕлхемĕр хăватне,
Чăваш çыннин ĕçченлĕхне,
Чăваш çыннин сăпайлăхне...
Çул уçă... Савăн эс, Ухсай!
Сан аллунта янрать сăрнай.
Чипер сăвву-юррусенче,
Чун-чĕререн çырнисенче
Хĕвел тухать йăлтăртатса,
Çырма юхать шăнкăртатса,

Маттур яшсем, маттур хӗрсем,
Телейлӗ ӗмӗр ачисем,
Ӗçе васкаççӗ эртелпе,
Çунатлă çутă ӗмӗтпе...
Кал-кал утатăн эс, Ухсай,
Ху калашле, пуçна ухса.
Сана Фадеев мухтани,
Твардовский ăшшăн тав туни,
Юлташăм, эс хуть мӗн кала,—
Çӗклеççӗ пирӗн кăмăла.
Ăçтан тата çакпа манан:
Муса Джалиль, Хасан Туфан
Сан талантна хакланăран
Ыр суннă пӗтӗм чун-вартан.
Çӳренӗ эсӗ Ӗпхӳре
Мажит Гафурипе пӗрле.
Мустай Карим, Сайфи Кудаш...
Сан çумăнта мӗн чул юлташ!
Эс хăраман йывăрлăхран,
Ӗçрен писмен, ӗçрен тарман,
Суя çынна пуçна тайман,
Ăçу-аннў ятне яман.
Çӗршывшăн йывăр вăхăтра
Эс пултăн вутлă вăрçăра.
Хӗрӳ чӗремӗр хушнипе,
Хӗрӳ чӗремӗр чӗннипе
Эпир аркатнă тăшмана,
Усал фашист-çӗрçăтмана.
Ухсай, пӗрле эс халăхпа,
Пӗрле юратнă Çӗршывпа.
Шинель çаплах-ха сан çире,—
Салтак—сыхлатăн эс мире.
Пуса каччи пек сăнупа,
Янравлă сăвă-юрăпа
Утатăн эсӗ улăпла
Октябрь уçнă çулпала.

*1981*